# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаҫачĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

64 (8631) № * Юнкун, 2018 ҫулхи ҫурла (август) уйăхĕн 29-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


Августри конференци

## Ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулне – лайăх кăмăлпа



**Паянхи сăн ӳкерчĕкре эсир районти хастар педагогсене куратăр.**

**Сосновкăри тĕп шкулта историпе обществознани предмечĕсене вĕрентекен Ольга Рылина, «Солнышко» ача сачĕн воспитателĕ Татьяна Николаева, Муркашри вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Надежда Багрова тата Сыпайри тĕп шкулта географи предметне вĕрентекен Альбина Дашкова (сулахайран сылтăмалла) педагогсен августри конференцийĕнче Чăваш Республикин Вĕренӳ тата ҫамрăксен политикин министерствин Хисеп грамотине тивĕҫрĕҫ. Вĕсен пурин те ĕҫ стажĕ пĕчĕк мар, ҫавăнпах ĕҫри ăсталăхĕ те пысăк. Грамотăна тивĕҫни ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулне лайăх кăмăлпа пуҫăнма, ĕҫре татах та пысăкрах ҫитĕнӳсем тума хистенине палăртрĕҫ вĕсем.**

**Районти ытти педгога та августри конференцире тĕрлĕ шайри Хисеп грамотипе, Тав ҫырăвĕпе чысларĕҫ. Чăваш Республикин Гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ыйтăвĕсемпе ĕҫлекен патшалăх комитечĕн председателĕ Вениамин Петров тата Муркаш район администрацийĕн пуҫлăхĕ Ростислав Тимофеев, вĕренӳ пайĕн пуҫлăхĕ Зоя Дипломатова вĕренӳ сферинчи пĕтĕмĕшле ҫитĕнӳсене, уйрăм педагогсен Раҫҫей тата республика шайĕсенчи ҫитĕнĕвĕсене палăртрĕҫ. Ертӳҫĕсем педагогсене ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулĕнче ăнăҫу сунчĕҫ.**

**Ку эрнере вара педагогсен секци занятийĕсем иртеҫҫĕ. Вĕсенче ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулĕнче пурнăҫламалли задачăсене тĕплĕ сӳтсе яваҫҫĕ.**

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Суйлав

## Депутатсене суйлатпăр

**Сентябрĕн 9-мĕшĕ – пĕрлехи сасăлав кунĕ. Ҫав кун пирĕн районти пĕр мандатлă хăш-пĕр суйлав округĕнче те хушма суйлав иртет. Пĕрисен депутатсен Муркаш район Пухăвĕн депутачĕсене, теприсен депутатсен ял тăрăхĕсенчи Пухăвĕсен депутачĕсене суйламалла пулĕ. Ҫакă депутатсем ку е вăл сăлтавпа полномочи срокĕ ҫитмесĕрех хăйсен тивĕҫĕсене пурнăҫлама пăрахнипе сыхăннă. Муркаш территори суйлав комиссийĕн председателĕпе Лилия ТАРАСОВĂПА тĕл пулнă май ҫитес суйлав пирки кĕскен каласа пама ыйтрăм:**

– Малтанах депутатсен Муркаш район Пухăвĕн депутачĕсене суйласси пирки. Пĕр мандатлă 16-мĕш Турай тата 19-мĕш Отаркка суйлав округĕсемпе депутатсен район Пухăвĕн депутачĕсене суйламалла пулать. Ҫак вăхăта кандидатсем пурте паллă, суйлав комиссийĕ вĕсене регистрациленĕ. Ҫавна кăна каласа хăварасшăн. Кашни округĕпех кандидатсене регистрациленĕ. Пĕринпе 6 кандидат, тепĕринпе – 4. Вĕсем хушшинче кандидатсем тĕрлĕ партирен тăратнисем те, харпăр хăйне сĕннисем те пур. Апла пулсан кандидатсенчен чи тивĕҫлисене суйлама май пулĕ.

Кунсăр пуҫне 6 ял тăрăхĕн территорийĕнчи пĕр мандатлă 11 суйлав округĕнче депутатсен ял тăрăхĕсенчи Пухăвĕсен депутачĕсене суйлама тивет. Муркаш ял тăрăхне кĕрекен пĕр мандатлă 1-мĕш, 5-мĕш, 6-мĕш, 9-мĕш суйлав округĕсенче, Москакасси ял тăрăхне кĕрекен 8-мĕш, Ҫатракасси ял тăрăхне кĕрекен 4-мĕш, Турай ял тăрăхне кĕрекен 1-мĕш, Шетмĕпуҫ ял тăрăхне кĕрекен 1-мĕш, 5-мĕш, 8-мĕш, Йӳҫкасси ял тăрăхне кĕрекен 8-мĕш суйлав округĕсенче депутатсен вырăнсенчи Пухăвĕсен депутачĕсене суйлассипе хушма суйлав иртет. Регистрациленĕ кандидатсем пĕтĕмпе 39-ăн. Суйламалăх кунта та ҫителĕклĕ.

Депутатсен район Пухăвĕн депутатне тата депутатсен ял тăрăхĕсенчи Пухăвĕсен депутатне суйлама кандидата тăратнисен тулли списокне, вĕсенчен кашниех ăҫта ĕҫлени-пурăнни, кандидата кам сĕнни пирки район хаҫачĕн сентябрĕн 1-мĕшĕнчи номерĕнче пичетлесе кăларăпăр. Ун чухне кашни кандидат пирки пурте тĕплĕнрех пĕлме пултарĕҫ. Хальхи вăхăтра вара кандидатсем суйлавҫăсемпе тĕл пулусем ирттерме пуҫăннă ĕнтĕ.

Ҫавна та каласа хăвармалла. Августăн 29-мĕшĕнчен тытăнса сентябрĕн 8-мĕшĕчен участоксенчи пур суйлав комиссийĕнче те суйлавҫăсем валли вăхăтран маларах сасăлама май туса панă. Ҫакă ку е вăл сăлтава пула хăйсене суйлавҫăсен списокне кĕртнĕ суйлав участокĕнче сентябрĕн 9-мĕшĕнче сасăлава хутшăнма пултарайманнисене пырса тивет.

Федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн сасăлава хутшăнма пултарайманнин шута илме тивĕҫ сăлтавĕ шутне ҫаксене кĕртнĕ:

- отпускра пулни;
- командировкăра пулни;
- ҫакă вĕренӳ е ĕҫ режимĕпе сыхăннă пулсан;
- ҫакă патшалăх тата общество тивĕҫĕсене пурнăҫланипе сыхăннă пулсан;
- сывлăхпа сыхăннă пулсан.

Вăхăт ҫитмесĕрех сасăлав ирттерессипе участоксенчи суйлав комиссийĕсем ĕҫ кунĕсенче 16 сехетрен тытăнса 20 сехетчен, кану кунĕсенче 10 сехетрен тытăнса 14 сехетчен ĕҫлеҫҫĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ калаҫнă.**

Районта

## Уяр кунпа усă курса

Район уй-хирĕсенче хĕрӳ тапхăр пырать: вырмара тимлеҫҫĕ, ака-суха тăваҫҫĕ, анасене шуратаҫҫĕ, ҫĕр хатĕрлеҫҫĕ. Ҫак ĕҫсемпе тĕплĕнрех паллашма район администрацийĕн пуҫлăхĕ Р. Тимофеев «Свобода» тата «Герой» хуҫалăхсене ҫитсе килнĕ. Пĕрремĕш хуҫалăх ертӳҫи Л. Петров палăртнă тăрăх, кĕрхи культурăн пĕр гектар пуҫне тивекен вăтам тухăҫĕ 32 центнер ытларах пулнă, ҫавна май ҫитес вăхăтра ҫак культурăна 500 гектар ҫинче акса хăварасшăн. «Герой» хуҫалăхра тăрăшакансем те кашни минутпа тухăҫлă усă кураҫҫĕ. Хуҫалăх ертӳҫи Г. Иванова каланă тăрăх, кĕрхи культурăн пĕр гектар пуҫне тивекен вăтам тухăҫĕ 42 центнер шайĕнче пулнă. Ку енĕпе пысăк тупăш илме май пуррине шута илсе, ҫак культурăна иртнĕ ҫулхинчен ытларах акса хăварасшăн.

## Хастар яш-кĕрĕм валли

Чăваш Республикин Президенчĕн 2002 ҫулхи мартăн 6-мĕшĕнчи 51 номерлĕ «О мерах по усилению государственной поддержки молодых граждан в Чувашской Республике» Указĕпе килĕшӳллĕн пултарулла та пуҫарулла ҫамрăксемпе студентсене ҫулсеренех ятарлă стипенди парса хавхалантараҫҫĕ. Ҫак укҫа-тенкĕне тивĕҫес текенсен документсен пуххине район администрацийĕн вĕренӳ, ҫамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайне сентябрĕн 12-мĕшĕччен тăратмалла. Ку шута вĕренӳ, спорт, бизнес-проект, тĕпчев тата ытти ĕҫре пысăк ҫитĕнӳ тунă 14 ҫултан пуҫласа 30 ҫулчченхи яш-кĕрĕм кĕме пултарать. Тĕплĕнрех 8(83541) 62-0-92 номерпе шăнкăравласа пĕлме пулать.

## Ҫу кунĕпе сывпуллашрĕҫ

Ҫуллахи вăхăт – кашниншĕн чи юратнă тапхăр, уйрăмах ачасемшĕн. Акă шкула каймалли вăхăт ҫитрĕ. Ҫавна май орининсем ҫак кунсенче «До свидания, лето! Здравствуй, школа» сывпуллашу мероприятине ирттерчĕҫ. Уява пухăннисене вырăнти ял тăрăхĕн пуҫлăхĕ В. Пушкова саламларĕ, асăнмалăх парне парса хавхалантарчĕ. Вăл палăртнă тăрăх, кăҫал Оринин шкулĕн пĕрремĕш класне 12 ача каймалла. Мероприяти ертӳҫисем К. Андреева тата А. Блинова питех те кăсăклă программа хатĕрленĕ. Уява йĕркелекенĕ Чăваш Республикин культурăн тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ В. Васильева та ачасене ăнăҫу сунчĕ.

## Раҫҫей кинone кăмăллаҫҫĕ

Августăн 27-мĕшĕ Раҫҫей кино кунĕ пулнипе паллă. Ăна паллă тăвассинчен районти тĕп библиотека ĕҫченĕсем те аякра юлмарĕҫ. Вĕсем «Знатоки советских фильмов» викторина хатĕрлерĕҫ, мероприятие урамра ирттерчĕҫ. Библиотекарьсем ҫынсене уявпа саламларĕҫ, кино историйĕпе паллаштарчĕҫ, асăннă мероприятие хутшăннăшăн тав турĕҫ. Ҫынсем ҫакăн пек тĕл пулупа кăмăллă пулнине, Раҫҫей кинone яланах пăхма хатĕр пулнине палăртрĕҫ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА хатĕрленĕ.**

Саламлатпăр



Çатракасси ял тăрăхĕнчи Кашмашра пурăнакан юратнă хĕрĕме, мăшăра, йăмăка, аппана, аннене, хунямана, асаннене тата ялан ырă кăмăллă тăхлача – **Юлия Алексеевна ПУГАЧЕВĂНА** – 60 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Малашне те умри тивĕçӳсене чыслăн пурнăçлама ырлăх-сывлăх, телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Эс пур чух пирĕн пурнăç туллирех те илемлĕрех.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, аппăшĕн тата 3 йăмăкĕн çемйисем, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, хăти-тăхлачисем.**

Кашмашра пурăнакан ырă кăмăллă та ĕçчен, ялан тарават юлташăмăра – **Юлия Алексеевна ПУГАЧЕВĂНА** – çуралнă кунĕпе ăшшăн саламлатпăр. Эсĕ унччен пекех паян та, ыран та пурнăçри тата ĕçри хăвăн ăнтăлăхупа ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрасса эпир шанатпăр. Эсĕ ялти Культура çурчĕ çумĕнчи художество пултарулăх коллективне çӳренĕрен çакăн пек маттурлăхпа татах нумай çул пурăнма ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: тус-юлташĕсем, ĕçтешĕсем, художество пултарулăх коллективне çӳрекенсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра – Исетеркке ялĕнче пурăнакан **Алевтина Серафимовна АВВАКУМОВĂНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн, ăшшăн саламлатпăр. Пурнăçра ырри, лайăххи – пурте пултăр сан валли. Ачусемпе, мăнукусемпе савăнса пурăнма хурçă пек çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Турри сана татах нумай çул пурăнма сывлăхне, вăй-халне парса тăтăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр. Яланхи пекех ĕçчен те пултаруллă, хитре пулма сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, йăмăкĕ, йăмăкĕн ачисем тата вĕсен çемйисем.**



Эпĕ хамăн кукаçи **Андрей Васильевич ЯКОВЛЕВ** çинчен çыратăп. Вăл Ахмане ялĕнче нумай ачаллă çемьере çуралса ӳснĕ. Асли пулнă май, ашшĕ-амăшне ачаранпах пулăшса, ĕçлеме вĕреннĕ. 1968 çулта тракториста ĕçлеме пуçланă. Трактор çинче ĕçлеме пуçлани кăçал 50 çул çитрĕ. Халĕ те ĕçлеме пăрахман-ха. 15 çул 50 номерлĕ мехколоннăра ĕçленĕ хыççăн, «Передовик» совхозра 30 çул ĕçленĕ. Халĕ вара 5 çул В.В. Бархаткин фермер хуçалăхĕнче тăрăшать. Сухалать, тырă акать, кĕркунне пуçтарса кĕртет. Хăй килĕштернĕ ĕçе чунтанах юратса тăвать. Çывхарса килекен çуралнă кунĕпе ăна пурин ячĕпе те саламлатăп. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатăп. Виçĕ ача çитĕнтерсе кил-çурт çавăрса мăнукĕсемпе савăнса пурăнаççĕ манăн кукаçипе кукамай. Эпир, 7 мăнукĕ, вĕсене юрататпăр, вĕсемпе мухтанатпăр.

**Салампа: аслă мăнукĕ Катя Киргизова.**



Хисеплĕ те юратнă куккана, пиччене (ял-йышра ăна хисеплесе дядя тесе чĕнеççĕ) – Ярак ялĕнче пурăнакан **Владимир Николаевич ЗАМЯТИНА** 80 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр. Пурăнас кун-çулу такăр та вăрăм пултăр. Чир-чĕр санран пăрăнса иртчĕр. Юратнă мăшăрпа, тăвансемпе пĕрле ялахас пулма Турă пулăштăр.

**Саламлаканĕсем: Ивановсен, Замятинсен çемйисем тата пĕтĕм ял-йыш.**



Пирĕн хаклă та хисеплĕ çыннăмăра – Москакасси ялĕнче пурăнакан **Геннадий Георгиевич ВОЛКОВА** 70 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Эпир сана тулли пурнăçпа пурăнма çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу, вăрăм кун-çул сунатпăр. Мăшăрун юратăвĕ, ачусен хисепĕ, мăнуксен хаваслă сасси сана пурнăçра пурăнма вăй-хал парса тăччăр. Юрататпăр сана, чунтан хисеплетпĕр, эс пурришĕн Турра тав тăватпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

Суту-илӳ

# Хамăрăн продукци шанчăклăрах

Бюджет тупăшĕпе, налукпа тĕрлĕ тӳлев вăхăтра куçса пынипе пирĕн пурнăç пахалăхĕ тӳрременĕх çыхăннă. Çак ĕçсем тивĕçлĕ шайра пурнăçланса пырсан çулйĕр, социаллă тĕрлĕ учреждени тăвас ыйту çăмăлланать. Республика бюджетне укçа-тенкĕ ытларах пырса кĕресси потребитель мĕнле продукци туяннипе те тӳрременĕх çыхăннă, тĕслĕхрен, бюджет туласси çынсем хăш алкоголь продукцине кăмăлланинчен те чылай килет.

Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕ, промышленноçпа суту-илӳ министерствин официаллă сайчĕ пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра республикăра туса кăларнă алкоголь продукцийĕ асăннă таварăн пĕтĕмĕшле сутлăхĕнче 51,3 процент йышăнать. Республикăра ГОСТпа килĕшсе тăракан пахалăхлă алкоголь продукцине туса кăларакан икĕ завод хута кайнă пулин те, ку кăтарту Шупашкарта (38 процент), Çĕнĕ Шупашкарта ( 43 процент) пĕчĕкрех.

**Чăваш Республикин экономика аталанăвĕ, промышленноçпа суту-илӳ министрĕн Владимир Аврелькинăн** комментарийĕ ку тĕлĕшпе çапла:

– Хальхи вăхăтра лавккасенче сутакан сăра тата алкоголь продукцийĕн ассортименчĕ питех те пысăк. Тен кăшт тĕлĕнмеллле пек туйăнать, анчах та çак продукцие туса кăларакансем шăпах та бюджета укçа-тенкĕпе пуянлатакансен тĕп пайĕ шутланать.

Республика территорийĕнче сăра сутнин акцизĕсенчен тӳлев 100 процентĕпех Чăваш Республикин бюджетне пырса кĕрет, алкоголь продукцине сутнин тупăшĕ вара пирĕн субъектра çак продукцие мĕн чухлĕ сутнинчен килет.

Хамăр патра тавар туса кăларакана вара хӳтĕлемелле. Эпир, республика çыннисем, бюджет йĕркелӳçисем, бюджет пулăшăвĕпе тунă ырлăх-пурлăхпа усă куракансем. Ют производитель кăларнă эрех савăтне, черккине пушатнă май, эпир хамăр укçа-тенкĕне ют региона е çĕршыва паратпăр.

Йӳнĕ продукци хыççăн «чупмалла» мар. Тĕслĕхрен, Чăваш Енре кăларнă сăрана ГОСТпа килĕшӳллĕн йăлтах тивĕçлĕ шайра хатĕрленĕ, укçа-тенкĕпе вăхăта тăкакланă, хатĕр продукци хакне май пур таран чи пĕчĕк вăсере лартнă. Сентре çинче мĕн куратпăр-ха: аякран кӳрсе килнĕ продукци хакĕ вара чылай чухне пирĕн патринчен пĕчĕк. Аякран турттарса килсе тăкакланнă сăра хакĕ тем тесессĕн те пысăкрах пулмалла.

Палăртса хăварам, Китай çĕршывĕ сăра тути кĕртекен порошокран сăра тăвать. Эпир алкоголь продукцине ĕçме хистеместпĕр, ултавлă продукципе усă курассинчен асăрхаттаратпăр, хамăр патри пахалăхлă продукцие туянма сĕнетпĕр.

Асăннă министерствăн официаллă сайчĕ пĕлтернĕ тăрăх, республика территорийĕнче алкоголь продукцийĕпе 655 организаци 3387 объектра сутă тăвать. Августăн 1-мĕшĕ тĕлне республика бюджетне алкоголь продукцийĕн акцизĕсенчен 259,3 миллион тенкĕ укçа куçнă.

Пĕрремĕш çур çулта асăннă министерство 327 тĕрĕслев иртттернĕ, çак сферăра йĕркене пăснă 75 факт тупса палăртнă. Административлă ĕç пуçарнисем çине 1млн. та 300 пин тенкĕ штраф хунă.

**Район администрацийĕн экономика тата АПК аталанăвĕн пайĕн ертӳçи Ольга Тимофеева** ку тĕлĕшпе хăйĕн шухăшне çапла палăртрĕ:

– Çак тапхăр тĕлне районта алкоголь продукцине 28 лицензиат 164 объектра сутать, вăл шутра 28 обществăлла апатлану предприятийĕнче.

Эрех-сăра продукцийĕн сутуçин çак шайри саккунпа кăна килĕшсе ĕçлемелле. Анчах та тепĕр чухне хăшĕ-пĕри çакна пăхăнасшăн марри те тĕл пулать. Çавăн йышшисемшĕн çыннăн сывлăхĕ мар, укçа малти ретре тăрать. Полици сотрудникĕсем алкоголь продукцийĕпе касса аппарачĕсĕр, лицензисĕр тата ЕГАИС системине пăхăнмасăр сутă тунине тупса палăртнă факт та пулнă. Çавна май алкоголь продукцине мĕнпур йĕркене пăхăнса сутакан лавккасенче тата Чăваш Енре туса кăларнă пахалăхлă продукцие кăна туянма сĕнес килет, сывлăхшăн та шанчăклă. Анчах та кунта висене пĕлни кирлĕ, эрех-сăра сывлăха сиен кӳнине, йĕркене пăсасси те çавăнтан пуçланнине манар мар.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Вырма – 2018

# Техникăна юсавлă тытать



Ĕçе юратакан çăмăл çул-йĕр шырамасть. Хушнă ĕçе ялан яваплăха туйса пурнăçлама тăрăшать. Çакăн пек çыннсен пĕри вăл – Чкалов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн водителĕ Георгий Николаев. Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Юрпаш ялĕнче çуралса ӳснĕ Георгий Борисович ачаран ашшĕ-амăшĕнчен, кӳршĕ-аршăран, ял-йышран ĕçе юратса çитĕннĕ – пĕр кун та ĕçрен пăрăнса алă усса лараймасть вăл паян. «Хăнăхман эпĕ ĕçлемесĕр пурăнма. Çавăнпа та ака-сухана хутшăнма та, вырăх апачĕ хатĕрлеме те, вырмари ĕçсене вăхăтра та пахалăхлă пурнăçлама та хама шанса панă автомашинăна ялан юсавлă тытма тăрăшатăп. Техникăна вăхăтра пăхса тăрсан вăл час-час ванса кансĕрлемест», – терĕ ĕç хастарĕ хиртен турттарса килнĕ типĕ тырра йĕтем айне пушатса.

Водительпе çывăхарах паллашар-ха. Ялта ӳснĕскер, ачаллах автомашина рулĕ умне ларма ĕмĕтленнĕ. Вăтам шкул пĕтерсен ял ачи ĕмĕтне пурнăçа кĕртнĕ. Георгий Борисович 1983 çултанпа автомашина рулĕ умĕнче. Миçе пин километр хыçа юлнă-ши çак хушăра, миçе пин тонна тиев турттарнă-ши?

Техникăпа ĕçлессине чунĕпе парăннăскер, кулленхи пурнăçра унсăр пĕр кун та кунламан. Паян та вăл пĕр кунлăха та автомашина рульне алăран вĕçертмест.

– Хам пурнăçăмра техникăсăр пурăнаймарăм. Паян хам пурнăçăма тишкеретĕп те – эпĕ урăхла пултараймастăп. Автомашина манăн пурнăçра пĕрремĕш вырăнта тăрать, – терĕ çуллен исетерккĕсене вырма иртгерме пулăшакан Г. Николаев хаçат вулакансене ырă сунса.

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Чăвашстат пĕлтерет

# Шкула кайма мĕн хак?

Пĕлӳ кунĕччен шутлă кунсем юлчĕç. Август вĕçнелле шкул хатĕрĕсем хакланнине шута илекен ашшĕ-амăшĕ ачисене шкул çи-пуçне тата ытти кирлĕ хатĕре маларах туянса хума тăрăшать. Ĕлкĕрейменнисем вара çак кунсенче пасарсемпе лавккасенче кĕшĕлтетеççĕ.

Ачана шкула кайма вăтамран миçе тенкĕ тăкаклама тивет-ха? Çакна Чăвашстат ĕçченĕсем шутласа пăхнă.

Шкула каймалли таварсен списокĕнче чи малта шкул çи-пуçĕ тăрать. Вăлах – чи хакли. Июль уйăхĕнче арçын ачасен кĕпине вăтамран 622 тенкĕпе туяннă, шăлаварне – 1374 тенкĕпе. Хĕр ачасен кĕпи 1188 тенкĕ тăнă, юбка – 831 тенкĕ. Кусем – кашни кун кирлисем, апла пулсан пĕр кĕпепе тата пĕр шăлавар е юбкăпа çырлахаймастăн. Кунсăр пуçне пиджак та, кофта е джемпер та кирлĕ. Кофтăсем 1022 тенкĕ пулнă пулсан, пиджаксем хаклăрах та. Хĕр ачасем валли вара бантиксем те йӳнĕ мар.

Физкультура урокĕсене кĕме, паллах, ятарлă форма тата кроссовки кирлĕ. Вĕсен хакĕсем вăтамран 1562 тата 1090 тенкĕпе таншланă. Кĕркуннехи куртка хакĕ 3092 тенкĕ, сиврех чухне тăхăнмалли атă-пушмак 2907 тенкĕ тăнă. Яланах кирлĕ колготки, трико, чăлха пирки те манмалла мар.

Шкул хатĕрĕсене чикмелли йĕркеллĕ рюкзак вăтамран 2239 тенкĕ тăрать, унта чикмелли тетрадь-ручка, фломастер-сăрă тавраш3 те пурĕ пĕрле палăрăмлă суммăна пухăнать.




Ачана хальхи вăхăтра шкула та смартфонсăр яраймăн – ашшĕ-амăшĕпе çыхăну тытма кирлĕ. Вăтамран 7,5 пин тенкĕ. Уроксем тума вара – компьютер е ноутбук – 25644 тенкĕ.

Информаципе коммуникаци таварĕсемсĕр пуçне ачана шкула яма 10 пин тенкĕ ытла каять пулсан, вĕсем шкулта лайăх вĕреннипе савăнтарасса кăна кĕтмелли юлать.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

**Августăн 31-мĕшĕ – Ветеринари ĕçченĕн кунĕ**

# Ыранхи куна шанса вăй хураççĕ

**Çитес эрнекун, çурла уйăхĕн 31-мĕшĕнче, Раççей Ял хуçалăх министерстви 2014 çулта çирĕплетнĕ Ветеринари ĕçченĕн кунне паллă тăватпăр. Выльăх тухтăрĕ чĕрчунсен сывлăхĕпе пĕрлех çынсен сывлăхĕшĕн кĕрешес ĕçре те малти вырăнта тăрать. Çавăнпа та выльăх тухтăрĕн ĕçĕ малашне пĕр чăмăра ытларах пĕрлешессе шанас килет. Ветеринари служби умĕнче районти эпизооти лару-тăрăвне тивĕçлĕ шайра сыхласа хăварас, выльăх продукчĕсене суту-илĕве ветеринарипе санитари тĕлĕшĕнчен лайăхрах пахалăхпа кăларас, выльăх-чĕрлĕхпе халăхшăн пĕр евĕр чир-чĕре сарăлма паракан çулсене пӳлес тĕллевсем тăраççĕ. Вĕсене пĕрле çеç туллин пурнăçлама май пуррине курса тăракансемшĕн Ветеринари ĕçченĕн кунĕ – пĕлтерĕшлĕ уяв.**

Иртнĕ эрнекун, çурла уйăхĕн 24-мĕшĕнче, районти Культура çуртĕнче выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци тытăмĕнче ĕçлекенсем Ветеринари ĕçченĕн кунне паллă турĕç. Выльăх тухтăрĕсене тата вĕсемпе юнашар ĕçлекенсене уявпа саламлама пынисем хушшинче республикăри гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ыйтăвĕсемпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕ Вениамин Петров, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев, районти «Росгосстрах» филиал ертӳçи Валерий Вязов пулчĕç. Вĕсем пурте хăйсен сăмахĕнче этемлĕх хăйĕн пурнăçĕнче выльăх-чĕрлĕхпе авалтанах тачă хутшăнура пулнине палăртрĕç. Чĕрчунсем хушшинчи чир-чĕре сарăлма паманни вара этемлĕхе те сывă пурнăç парать. Ахальтен каламан ĕнтĕ – выльăх тухтăрĕ этемлĕхе сыватать. Хăйĕн сăмахĕнче Вениамин Иванович çакна уйрăм тĕслĕхсемпе çирĕплетсе выльăх тухтăрĕсене тав турĕ, суйласа илнĕ ĕçре вĕсем нихăçан та алă усмасса шаннине пĕлтерчĕ.

Ростислав Николаевич вара хăйĕн сăмахĕнче районти выльăх тухтăрĕсен ĕçне пысăка хурса хакланипе пĕрлех ĕçри хастарсен пысăк ушкăнне район администрацийĕн пуçлăхĕн Тав хучĕсемпе чысларĕ.

– Пирĕн район ял хуçалăх районĕ пулнăран, сирĕн ĕçпе Муркаш ен аталанăвĕ пĕр урапа çинче. Çакна ăнланса, эсир малашне те хăвăр ĕçĕре чыслăн пурнăçласса шанатăп, – терĕ вăл.

Валерий Иванович выльăх тухтăрĕпе страхлакан агент халăхшăн пĕрле ĕçленине, вăл малашне те çаплах юласса шаннине палăртрĕ.

Уявра районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин историйĕпе, кăçал пурнăçланă ĕç-хĕлпе, умри тĕллевсемпе выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци ертӳçи Н. Яковлев уçăмлă доклад туса пачĕ. Хăйĕн сăмахĕнче Николай Семенович ĕçтешĕсене пурнăç çĕнĕ тĕллевсем лартнине пĕлтерчĕ, ĕçри хастарсене чысларĕ. Çавăн пекех вăл паянхи ĕçхĕл никĕсĕнче ветерансен ӳсĕмĕ тăнине кашнине ятран асăнса палăртрĕ. Уйрăм хастарсене Тав хучĕпе тата Хисеп грамотипе наградăларĕ.

Кăçалхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне районти тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсенче мăйракаллă шултра выльăх пĕтĕмпе 15581 пуç, сыснасем – 3978 пуç, сурăхсемпе качакасем – 13432 пуç, чăхчĕп 643 пин пуç ытла шутланнă. Выльăх тухтăрĕсем вĕсем тĕлĕшпе 40 ытла профилактика ĕçĕ, 46 диагностика тĕпчевĕ т. ыт. те ирттернĕ. Çак ĕçсене вăхăтра пурнăçлани районти эпизооти лару-тăрăвне тивĕçлĕ шайра сыхласа хăварма май парать.

Асăннă коллектив хăйĕн ĕç-хĕлне ЧР Министрсен Кабинечĕн 1964 çулхи пуш уйăхĕн 24-мĕшĕнчи йышăнăвĕнчен пуçланă. Пĕрремĕш пуçлăхсем Р. Огурцов, А. Алексеев пулнă. Вĕсем никĕсленĕ учреждение 1965 çултан пуçласа 34 çул Михаил Миронов ăнăçлă ертсе пынă: коллектива çултан-çул аталану çулĕпе уттарнă, район пурнăçĕнче пĕлтерĕшлĕ вырăна кăларнă. Туслă та ĕçчен, малтуртăмлă коллектив пуçĕнче 1999 çултанпа Н. Яковлев тăрать.

Ял çыннин харпăрлăхĕнчи тата пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи обществăлла выльăх-чĕрлĕхе таса-сывă пăхса тăрассипе районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци яваплă пулса тăрать. Выльăх тухтăрĕсем хăйсен ĕçне ответлăха туйса вăхăтра та пахалăхлă пурнăçлани ял хуçалăх продукцийĕн пахалăхне те, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен экономикипе çынсен пурнăçне те, халăх сывлăхне те тӳрремĕнех витĕм кӳрет.

Пĕр ĕç те, ӳсĕм те çын ĕçлемесĕр пулмасть. Истори аталанăвĕнче пĕрлехи ĕç ăнăçăвне Чăваш Республикин тата Раççейăн тава тивĕçлĕ выльăх тухтăрĕсем – М. Миронов, Р. Петрова, М. Мясников, А. Михайлова, Р. Леонтьева, М. Павлова, Н. Воробьева, Г. Кириллова, И. Яковлева, Н. Петрова, Л. Королькова, Е. Петрова, В. Андреев пысăк тӳпе хывни – паянхи коллективра кашнин асĕнче.

Çавăнпа та уявра хастар ĕçченсене Тав çырăвĕсемпе, Хисеп грамотисемпе, медальсемпе чыслани районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци коллективĕнче ырă пуçарусем манăçманнине çирĕплетет. Малашне те çаплах пултăрччĕ вăл.

**А. БЕЛОВ.**

**Росреестрта**

# Мĕн пĕлме тивĕç сад ăсти?

1. Сад (дача) юлташлăхĕн членĕсен харпăрлăха çĕр участокĕ туянас пулсан, вырăнти хăй тытăмлăх органĕн йышăнăвĕ кирлĕ. Сад юлташлăхĕн членĕн кĕнеки пулни кăна çителĕксĕр.

2. Енчен те сад учстокне тата унти çурт-йĕре регистрацилемен пулсан, вĕсене сутма-туянма, парнелеме т. ыт. те май килмест. Участокпа çурт-йĕре туяннă чухне сутнин-туяннин килĕшĕвне тумалла, харпăрлăх прави урăх çынна куçнине Росреестрта регистрацилемелле.

3. Çĕр участокĕн чиккисене чикĕлев ĕçĕсене (межевание) туса ирттернĕ чухне кадастр инженерĕ палăртать. Кадастр ĕçĕсем хыççăн çĕр участокĕн координачĕсене куçман пурлăхăн пĕрлехи патшалăх реестрне кĕртеççĕ.

4. Сад (дача) участокĕнче пурăнмалли тата ытти çурт-йĕр тума юрать. Вĕсене тума тата харпăрлăх правине регистрацилеме вырăнти администрацире ирĕк илме кирлĕ мар. Техника планĕпе çĕр участокĕн харпăрлăх документчĕ кăна кирлĕ пулаççĕ. 2019 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчен тытăнса строительство ĕçĕсене хăçан пуçăнасси тата вĕçлесси пирки обязательнăй йĕркепе вырăнти хăй тытăмлăх органне пĕлтермелле пулать.

5. Çĕр участокĕпе тĕллевлĕ кăна усă курас пулать. Унпа усă курманшăн 20 пин тенкĕрен тытăнса 50 пин тенкĕ таран штрафлама пăхса хунă. Суд йышăнăвĕпе участока туртса та илме пултараççĕ.

6. Çын Росреестра заявлени çырса парса хăйĕн çĕр участокĕн харпăрлăх правине пăрахăçлаттарма пултарать. Çĕр участокĕ ĕмĕрлĕх харпăрлăхра пулнин правине пăрахăçлаттарма вырăнти хăй тытăмлăх органне заявлени памалла.

7. Сад юлташлăхĕнче пурте пĕрле усă куракан пурлăх (вăл шутра çĕр участокĕ те) юлташлăх членĕсен пĕрлехи харпăрлăхĕнче е юридици сăпачĕн – сад юлташлăхĕн харпăрлăхĕнче пулма пултарать.

**М. ИВАНОВА.**

**Вулаканпа калаçатпăр**

# Ачалăха аса илсен...

Эпир пурте ачалăхра пулнă, эпир пурте – ачалăхран. Хăшĕсен асĕнче вăл телейлĕ те савăнăçлă самантсем упраса хăварнă. Теприсен вара çав çулсенче чун-чĕрене ыраттаракан пулăмсемсĕр те пулман.

Эпĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланиччен çичĕ уйăх маларах çут тĕнчене килнĕ. Юнлă вăрçă пуçлансан пĕр уйăхранах атте фронта тухса кайнă, пирĕн ирĕклĕ пурнăçшăн пуç хунă. Çапла вара эпĕ аттепе сакăр уйăхра ĕмĕрлĕхех сывпуллашнă. Çавăнпа та манăн ачалăх савăнăçлă та телейлĕ пулнă тесе калама ниепле те чĕлхе çаврăнмасть. Фронтра кунĕн-çĕрĕн çапăçусем пынă вăхăтра та, вăрçă хыççăн та манăн пурнăç питĕ йывăр пулнă: тăхăнма кĕпи-тумтирĕ пулман, тăраниччен çиме çăкăр-тăварĕ çитмен...

Анне ĕç кунĕн минимумне тултарма яланах колхоз ĕçĕнче вăй хунине лайăх астăватăп: çав çулсенче çирĕплетнĕ йĕркепе арçынсен çулталăкра 300 кун, хĕрарăмсен 250 кун ĕçе тухмалла пулнă. Ĕç кунĕн укçине ячĕшĕн кăна шутлатчĕç, ăна алла памастчĕç. Çулталăк вĕçленсен ĕç кунĕ тăрăх колхозниксене кăштах тырă тата улăм валеççе паратчĕç. Тыр-пул япăх пулнă çул ăна та параймастчĕç. Анчах ялта пурăнакансен ял хуçалăх налукне пурпĕрех вăхăтра тӳлесе татмаллаччĕ. Унсăр пуçне палăртнă вăхăтра çирĕплетнĕ виçепе патшалăха аш-какай, сĕт, шăратнă çу, çăмарта, çĕр улми парса тăмаллаччĕ. Çав вăхăтрах вăрçă хыççăнхи тапхăрта халăх хуçалăхне малалла аталантарас тĕллевпе вăйпах заем çырăнтаратчĕç. Асăннă парăмсене вăхăтра тӳлесе татас тесе анне пушă вăхăтра яланах Шупашкар пасарне кутамккапа çăмарта е тăпăрчă сутма 30 çухрăма çуранах кайса килетчĕ. 11 – 12 çул тултарсан эпĕ те аннепе пĕрле тĕп хуламăра 4 хутчен çуран кайса килни нихăçан та асран тухмасть. Питĕ ывăннăччĕ эпĕ ун чух. Çав вăхăтсенче анне мана пĕçернĕ пĕр çăмарта пани те маншăн пысăк савăнăç пулни ĕнерхи пекех асра.

Çулсем иртнĕ май ытларах чухне шкул çулĕсенчи савăнăçлă тата хурлăхлă самантсем аса килеççĕ...

1947 çул. Анне мана пĕрремĕш класа кайма тапрантарчĕ. Килти пиртен çĕленĕ сумкăна пĕр тетрадь, «Букварь» кĕнеке тата мăнакка ăсталанă кăранташсем хумалли йывăç курупка хутăмăр. Урара çĕнĕ çăпата, килти пиртен çĕлесе пĕветнĕ шălавар. Ку ĕнтĕ манăн ачалăхри савăнăçлă самантсенчен пĕри шутланать.

Кунта сăмах май мăнакка çинчен те каласа хăварас килет. Аттен аппăшĕ пирĕнпе пĕрле пурăнатчĕ. Атте фронта тухса кайнă хыççăн вăл килти пур ĕçе те хăех тума тăрăшатчĕ. Унăн аллинче пуртă-пăчăкă выляса кăна тăратчĕ. Выльăх витине те юсатчĕ вăл, пахча картине те çĕнетсех тăратчĕ, килти выльăх-чĕрлĕхне те хăех пусса тирпейлетчĕ. Çав çулсенче мăнакка мана валли çунашкине те, йĕлтĕрне те туса пани асран тухмасть. Ӳсерехпе çăпата хуçма та мана вăлах вĕрентрĕ. Çак ĕçсене, ман шутпа, ялти пур арçын та пурнăçлайман та пулĕ. Мăнакка вара пултаратчĕ.

Шкулта пирĕн класра 28 ачаччĕ. 13 ачан ашшĕсем вăрçă хирĕнчен таврăнайманччĕ. Пĕрремĕш класран вĕренсе тухас умĕн анне мана атте вăрçăра пуç хуни, вăл таврăнас çукки çинчен пĕлтерни чи хурлăхлă самантсенчен пĕри пулчĕ. Ку çул ĕмĕрлĕхех ман асра юлчĕ, мĕншĕн тесен аттене çĕнтерӳпе таврăнасса эпĕ куллен кĕтнĕ-çке-ха.

2-мĕш класра вĕренме шкулта вырăн çитменрен уроксем Пошкар ялĕнчи уйрăм çын çуртĕнче иртетчĕç. Кунта вара икĕ çухрăма икĕ çырма урлă утма çулпа çӳреттĕмĕр. Çав хĕл мăнакка мана пĕчĕк çунашка туса панăччĕ. Тăвайккине ярăнма тухсан кӳршĕ ачипе чăнкă вырăнтан ярăнса антăмăр та çырма тĕпĕнчи юр витмен, шăннă çĕр муклашкине пырса тăрăнтăмăр. Çунашкан пĕр тупанĕ çатăртах хуçăлчĕ. Мăнакка вăрçасран хăраса хуçăк çунашкана киле сĕтĕрсе пырса тӳрех курăнмалла мар вырăна хутăм. Тепĕр ирхине ун пирки мăнаккана каларăм та вăл сăмах хушиччен хăвăртрах шкула тухса чупрăм. Кун хăвăрт иртрĕ, ваннă çунашка асран тухмарĕ, асăмран айăп сирĕлмерĕ. Шкултан таврăнсан мăнакка тенкел айĕнчен çĕнетнĕ çунашка кăларса тыттарни тепĕр ырă пулăм пулса асра юлчĕ. «Ме, тепре çĕмĕрсе кил», – терĕ вăл шăппăн. Эпĕ шкула кайсан вăл çĕнĕ тупан хатĕрлесе, ăна кăмакара хĕртсе, авса çунашкана тĕпрен юсанă иккен.

Акă эпир 3-мĕш класс вĕренсе пĕтертĕмĕр. Вăл çулсенче пур çĕрте те майăн 1-мĕшĕн уявне вăйлă уявлатчĕç. Эпир вара хĕрлĕ ялавсем йăтса урамсем тăрăх юрласа утаттăмăр. Шкул директорĕ çав çул асăннă уява Катькасри пуçламăш шкулта ирттерме йышăнни çинчен пĕлтерчĕ. Пĕрле вĕренекенсем хушшинче капăртарах тăхăннисем те пурччĕ. Эпир вара, 5 ача, Катькас ялне çăпатасемпе кайма аван мар тесе, вĕсене салтса шкултах хăвартăмăр. Çара уран утма меллĕрех те терĕмĕр. Çакна курсан вĕрентекен пире нимех те каламарĕ. Çырма урлă 3 çухрăмри Катькас шкулне çитнĕ çĕре пирĕн урасем шăнса хытрĕç. Ял хушшинче те питĕ пылчăкчĕ. Çитменнине кунта та урам тăрăх юрласа утмалла пулчĕ. Кунти вĕрентекен: «Ку ачасем мĕншĕн çара уранах килнĕ?» – тесе ыйтсан, пирĕн учительница ăна нимĕн те хуравлаймарĕ. Аслăрах класрисем пире хĕрхенекен учителĕн хушамачĕ Шишкин пулни пирки пĕлтерчĕç.

**(Вĕçĕ çитес номерте).**

**Герман ОСИПОВ.**

Шомик ялĕ.

**«Кĕр парнисем – 2018»**

# Ярмăрккăна чĕнеççĕ

Ялпа хула хушшинчи туслă çыхăнăва малалла аталантарассине тĕпе хурса Чăваш Республикинче çурла уйăхĕн 25-мĕшĕнчен тытăнса, республикăри ытти хулари пекех, Шупашкарта та «Кĕр парнисем – 2018» ярмăрккă суту-илĕвĕсем иртеççĕ. Ку ярмăрккăсем юлашки çулсенче кун йĕркине çирĕп кĕчĕç. Вĕсен уссине муркашсем çулленех унта хутшăнса хăйсен тĕслĕхĕпе туяççĕ.

Маларах каланине шута илсе, ял çыннисене тата пĕрлешӳллĕ кооперативсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсене «Кĕр парнисем – 2018» ярмăрккă суту-илĕвĕсем тĕп хуламăрта хăш суту-илӳ комплексĕсенче иртни пирки хыпарлатпăр:

- «Дар» ООО (324 стрелковăй дивизи урамĕнчи 22-мĕш çурт тĕлĕ);
- «Мадагаскар» суту-илӳ центрĕ умĕнчи лапам (Ленинла Комсомол урамĕнчи 21а çурт);
- Николаев урамĕнчи суту-илӳ комплексĕ (Николаев урамĕнчи 14а çурт);
- «Северная» суту-илӳ комлексĕ умĕнчи лапам (Мускав проспектĕнчи 40а çурт);
- «Садовый» микрорайон (Г. Айги проспектĕнчи 15 çурт тĕлĕ);
- Фермер кил картишĕ («Çĕнĕ хула» микрорайонăн Новогородская урамри 40-мĕш çурт тĕлĕ).

Асăннă пасарсене тата палăртнă суту-илӳ вырăнĕсене ял хуçалăх продукцийĕ сутма тухакансене тӳлевсĕр вырăнсем параççĕ. Асăннă суту-илĕве районти тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсемпе уйрăм ял çыннисем активлă хутшăнасса шанатпăр.

**А. БЕЛОВ.**

Йĕрке

# Саккуна пăхăнса пурăнмалла

Çак кунсенче Раççей Федерацийĕн УИИ УФСИН Чăваш Енри управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи филиалĕн ĕçченĕсем РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн ĕçченĕсемпе пĕрле «Условник» профилактика мероприятине ирттерчĕç. Тĕл пулăва автотранспортпа усă курассине саккуна пăснишĕн учета илнĕ граждансене чĕннĕ.

Тĕл пулăва РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн ертӳçин тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан М. Мясников, районти патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн пуçлăхĕ С. Иванов тата ыттисем хутшăнчĕç.

Çӳлерех асăннă филиалăн ертӳçин çумĕ О. Егорова «Кредитка» видеоролика паллаштарчĕ. Ун хыççăн калаçу айăплисене тепĕр хут преступлени тăвассинчен асăрхаттарасси, суд пригоровне пурнăçласси пирки пулчĕ. Çавăн пекех çул-йĕр çинчи инкексене, çул-йĕр правилинчи çĕнĕлĕхсене тишкерчĕç. Мероприяти вĕçĕнче кăсăклантаракан ыйтусене çӳтсе явăç.

**О. ЕГОРОВА,**
**филиал ертӳçин çумĕ.**

Пирĕн календарь

# Турккăсен çарне аркатнă

Августăн 28-мĕшĕ – Раççей çар историйĕн паллă кунĕ. Çак кун 1739 çулта вырăссен Бурхард Миних генерал-фельдмаршал ертсе пыракан çарĕ Ставучан патĕнче турккăсен çарне çапса аркатнă.

# Вырăс гвардийĕ палăрнă

Августăн 29-мĕшĕ – Раççей çар историйĕн паллă кунĕ. Çак кун 1813 çулта Богемăри Кульм патĕнче (халĕ Чехи территорине кĕрет) французсен çарĕпе пынă çапăçура вырăссен гвардийĕ палăрнă.

# Гитлер союзника çухатнă

Августăн 29-мĕшĕ – Раççей çар историйĕн паллă кунĕ. Çак кун 1944 çулта Яссы-Кишинев операцине ăнăçлă ирттернĕ май, Молдавие ирĕке кăларнă. Ку вăл Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче нацистла Германипе Румыние хирĕç ирттернĕ ăнăçлă стратеги операцийĕ пулса тăрать. Румыни çарĕсем тек СССР-а хирĕç тăрайман.

# Прусси çарне çĕнтернĕ

Августăн 30-мĕшĕ – Раççей çар историйĕн паллă кунĕ. Çак кун 1757 çулта вырăс çарĕсем Степан Федорович Апраксин ертсе пынипе Прусси çарне çĕнтернĕ. Ку вăл хĕвелтухăç Пруссири Гросс-Егерсдорф патĕнче.

Объявления / Пĕлтерӳсем

31 августа 2018 года с 10:00 до 13:00 часов прокуратурой района по поручению прокуратуры Чувашской Республики будет проводиться прием граждан по вопросам ЖКХ.

Прием будет проводиться в помещении ООО УК «ЖКХ» Моргаушского района по адресу: с. Моргауши, ул. Гагарина, д.10 а.

**Январь уйăхĕнче 7-мĕш пăруламалли хура-шурă ĕне сутатпăр. Тел. 8-927-994-28-02.**

* * *

**Куплю коров, бычков от месяца, телок. Дорого. Тел. 8-937-952-33-80. 1-5.**

* * *

**Продаю а/м ГАЗ - 53 «Б» самосвал, на ходу, двигатель ГАЗ - 53. Тел. 8-937-380-75-61.**

* * *

**Продаю 1-комнатную квартиру в с. Б. Сундырь по ул. Советская, 11. Тел. 8-937-010-30-00. 1-2.**

* * *

**Продаю земельный участок пл. 43 сот. в д. Шербаши, ровное место, за огородом асфальтированная дорога, магазин рядом. Цена договорная. Тел. 8-965-681-32-83. 1-2.**

* * *

**Требуются рабочие на уборку картофеля в Нижегородскую область. Тел. 8-964-836-43-36, 8-986-761-55-31.**

* * *

**Требуются рабочие на уборку картофеля. Оплата договорная. Тел. 8-999-140-85-96.**

**Январь пуçламăшĕнче пиллĕкмĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел. 8-905-198-01-46.**

* * *

**Продаю солому, сено 1, 2 укоса в тюках. Есть доставка. Тел. 8-927-858-62-86. 5-5.**

* * *

**Икĕ така, 10 уйăхрисене, сутатăп. Тел. 8-927-843-14-56.**

* * *

**Продаю дрова березовые колотые с доставкой. Тел. 8-937-384-56-21.**

* * *

**Требуется бухгалтер в сельхозпредприятие Моргаушского района. Тел. 8-927-666-70-70. 1-2.**

* * *

**Сĕлĕпе урпа хутăшĕ сутатпăр. Хакĕ – 5 тенкĕ/кг. Лессе парсан 6 тенкĕ/кг. Тел. 8-906-135-12-14, 8-927-868-34-65.**

* * *

**Мартра иккĕмĕш пăруламалли ăратлă, сĕтлĕ хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел. 8-917-666-49-01.**

Объявления / Пĕлтерӳсем

**КРОВЛЯ**
**ЛЮБОЙ СЛОЖНОСТИ**
**Работаем быстро: качественно, дешево. Поможем подобрать и доставить стройматериалы по низким ценам.**
**Цены ниже, чем на рынке.**
**КЛАДКА, ФУНДАМЕНТНЫЕ работы. Тел.: 8-905-342-00-70.** 10-10.

**ПРОДАЮ: ПЕСОК, ОПГС (ГРАВМАССА), ПГС, ЩЕБЕНЬ, КЕРАМЗИТ и др.**
**ДОСТАВКА из с. МОРГАУШИ. НЕДОРОГО. Тел. 8-927-862-42-44.** 3-10.

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ. Доставка.**
**Тел. 8-903-389-94-76.** 9-10.

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ. Доставка.**
**Тел. 8-919-650-96-68.** 9-10.

**Продаю: Гравмассу. Бой кирпича. Песок. Щебень. Доставка.**
**Тел. 8-905-028-22-25.** 6-10.

**ХУДОЖЕСТВЕННАЯ КОВКА**



**ЗАБОРЫ, ВОРОТА, ПЕРИЛА, РЕШЕТКИ, КОЗЫРЬКИ, АВТОНАВЕСЫ и др. Тел. 8-927-668-09-50.**
**Наш сайт: kovspec.ru** 5-13.

**Продаю ДЕШЕВО асфальтную крошку, щебень (ОПГС), гравмассу, песок, бой кирпича, чернозем, торф, навоз. Доставка. Тел. 8-961-347-25-47. 13-14.**

* * *

**ПЕСОК КАРЬЕРНЫЙ, РЕЧНОЙ, ГРАВМАССА, ЩЕБЕНЬ, БОЙ КИРПИЧА, ГРУНТ, НАВОЗ и.т.д. Доставка по Моргаушскому району от 1 до 20 тонн. НЕДОРОГО. Тел. 8-905-345-96-62. 8-10.**

* * *

**Услуги мини-экскаватора. Ширина ковша – 30, 40, 50 см., глубина – 2,7 м. Канализация, водопровод под ключ. Час работы – 1000 руб. + доставка. Работаем с организациями по безналичному расчету. Тел. 8-927-847-85-59, 8-962-599-04-70. 4-4.**

* * *

**В ПАО «Моргаушский кирпичный завод» требуются работники в смену: водитель погрузчика (фронтального), токарь, электромонтер, машинист экскаватора, юрисконсульт. Тел. 62-3-47. 2-2.**

* * *

**ОАО «Ядринмолоко» приглашает на работу микробиолога, лаборанта, укладчика-упаковщика, грузчика. Трудоустройство по ТК, полный соц. пакет. Тел. 8-965-688-97-40, 8-962-321-23-40. 5-5.**

**Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; цемент. Доставка бесплатно. Цена договорная. Тел. 8-903-346-40-58, 8-927-996-16-52.** 4-10.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел. 8-927-667-40-92.** 12-43.

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ. Доставка.**
**Тел. 8-903-065-60-58.** 25-44.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел. 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 5-20.

**В магазине «Василек» на территории Моргаушского рынка – НОУТБУКИ, КОМПЬЮТЕРЫ, СОТОВЫЕ ТЕЛЕФОНЫ!!!**
**Большой выбор!**
**АКЦИЯ ДЛЯ ШКОЛЬНИКОВ И СТУДЕНТОВ!**
**Огромные скидки и приятные подарки!**
**холодильники, морозильники**
**Велосипеды**
**Стиральные машины**
**Газовые, электрические плиты**
**ЖК телевизоры**
**Микроволновки**
**Пылесосы, сотовые телефоны, а также мелкая бытовая техника (блендеры, чайники и др.)**
**Кредит. Рассрочка.**
**Доставка бесплатная. Тел.: 8-906-135-98-89.** 2-10.

**Продаю: Гравмассу. Песок. Бой кирпича. Конский навоз. Доставка. Тел. 8-906-380-12-36. 5-11.**

* * *

**Куплю скотину дорого: КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК, ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Тел. 8-961-345-77-89. 7-25.**

* * *

**Срочно продается земельный участок пл. 40 сот. с деревянными постройками. Цена договорная. Тел. 8-906-136-81-40. 2-2.**

**Куплю коров, бычков, телок, молочных телят, баранов, овец. Тел. 8-905-341-69-25. 5-6.**

* * *

**Услуги зерноуборочного комбайна. Тел. 8-906-131-13-24, 8-952-312-72-78. 3-4.**

* * *

**Требуются рабочие на уборку картофеля. Зар. плата: грузчики – 1000 руб., сборщики – 800 руб. в день. Проживание, трехразовое питание БЕСПЛАТНО. Спасский район. Тел. 8-920-012-84-28, Иван. 2-2.**

Моргаушское районное Собрание депутатов и администрация Моргаушского района выражают глубокое соболезнование Рыжковой Л. А., начальнику отдела культуры, архивного дела и туризма администрации Моргаушского района, в связи с безвременной кончиной отца
**РЕПИНА**
**Александра Григорьевича.**

Отдел культуры, архивного дела и туризма администрации Моргаушского района и райком профсоюза работников культуры Моргаушского района соболезнуют Рыжковой Л.А., начальнику отдела культуры, архивного дела и туризма администрации Моргаушского района, ее родным и близким, по поводу смерти отца
**РЕПИНА**
**Александра Григорьевича.**

Муркашри тĕп больница коллективĕ кунта нумай çул терапевтра ĕçленĕ, сывлăха сыхлас ĕç ветеранĕ
Вера Алексеевна
ИЛЬИНА (ТИМОФЕЕВА)
вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланса пĕлтерет.

Отдел культуры, архивного дела и туризма администрации Моргаушского района и райком профсоюза работников культуры Моргаушского района выражают глубокое соболезнование Налимовой Е.И., заведующей Моргаушской центральной районной детской библиотеки им. А.Г. Николаева, ее родным и близким, по поводу кончины матери
**ТИМОФЕЕВОЙ**
**Веры Алексеевны.**

«Путене» ача сачĕн коллективĕ кунта воспитательте нумай çул ĕçлекен Л.В. Щукинан
**МĂШĂРĔ**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки тарăннăн хурланса пĕлтерет.

Муркашри тĕп больница коллективĕ кунта ача-пăча уйрăмĕнче медсестрара ĕçлекен Н.А. Степанован
**АМĂШĔ**
вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Прогноз погоды** — По данным сайта rp5.ru

| | Среда | | | | Четверг | | | | Пятница | | | | Суббота | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Явления погоды | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура | +15 | +24 | +28 | +20 | +15 | +23 | +27 | +20 | +17 | +19 | +26 | +21 | +18 | +19 | +23 | +16 |
| Давление | 751 | 752 | 752 | 752 | 752 | 752 | 752 | 752 | 751 | 752 | 752 | 751 | 750 | 750 | 751 | 752 |
| Ветер | 3 | 2 | 3 | 4 | 3 | 3 | 3 | 4 | 4 | 5 | 5 | 6 | 5 | 3 | 4 | 3 |
| Порывы | | | 9 | | | | 8 | 8 | 7 | 9 | 10 | 10 | 10 | 7 | 9 | 6 |
| Направление | Ю | Ю-В | Ю | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю-В | В | В | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю-В | З | З | С-З |

Муркаш районĕнчи
«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви.
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редакторшăн Н.Н. НИКОЛАЕВА.**

Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
Телефонсем: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction_morgau@mail.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемесçĕ, каялла тавăрса памасçĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмасçĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Р– реклама материалĕ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ
В.Л. Шапошников.
Пичете панă 28.08.2018 ç.
Пичете памалли вăхăт:
графикпа – 17 сех. 20 мин.,
чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4390

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии АО «ИПК «Чувашия»: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.